Вĕрентӳ

# Ӳсĕмсен ҫулĕ ҫинче хастар пулмалла

***Иртнĕ вĕренӳ ҫулĕ районти вĕрентӳ тытăмĕнче ĕҫлекенсемшĕн, шкул ачисемшĕн питĕ тулли те ăнăҫлă ҫул пулчĕ. Вĕрентӳ системине юрăхлă та пахалăхлă, экономика тĕлĕшĕнчен эффективлă туса хурасси, ачасен социаллă прависене хӳтĕлесси, ĕҫе кадрсем тата специалистсем тĕлĕшĕнчен тултарасси, «Вĕрентӳ» нацпроектра палăртнă приоритетсене пурнăҫа кĕртсе пырасси, «Пирĕн ҫĕнĕ шкул» националлă вĕрентӳ пуҫарăвне сӳтсе явасси – ҫакă пĕтĕмпех пирĕн тĕллев пулчĕ.***

## АЧА САЧĔСЕМ

Районта пурĕ 16 ача сачĕ, 5 пуҫламăш шкул–ача сачĕ, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем ҫумĕнчи 8 шкулчченхи ушкăн тата 2 филиал ĕҫлет. 2009 ҫулхи декабрĕн 31-мĕшĕ тĕлне 2210 ачаран 1470 ача садике ҫӳренĕ. Шкула кайма хатĕрленекенчен (5-6,5 ҫулхисем) 92,2 проценчĕ – ача садне ҫӳрекенсем.

Декабрь уйăхĕнче Катькас ял тăрăхĕнчи Яракри Культура ҫурчĕ ҫумĕнче шкула кайма хатĕрленекен ачасем валли талăкра 10 сехет ĕҫлекен ушкăн уҫма май тупрăмăр. Ҫак ушкăн Катькасри пуҫламăш шкул-ача сачĕн тытăмĕнче. Ашшĕ-амăшĕн ыйтăвĕсене тивĕҫтерес тенипех ҫак вĕренӳ ҫулĕнче «Путене» ача садĕнче 60 ача ҫӳремелĕх 4 ушкăн уҫăлчĕ.

Асăннă лайăх самантсемпе пĕрлех Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш салисенче пурпĕр «ачасен черечĕ» пĕтмен, шкулчченхи вăхăтрисене те 100 проценчĕпех садике ҫӳретме май килмест-ха. Садиксене пурлăх базине пуянлатасси, ҫуртсене капиталлă юсав тăвасси те – кун йĕркинчи ыйту. Пĕлтĕр вырăнти бюджетран уйăрса панă укҫа-тенкĕпе усă курса «Путене» тата «Солнышко» ача сачĕсен ҫурт ҫивиттийĕсене юсаса ҫĕнетме май пулчĕ. Кăҫал вара «Малыш» ача сачĕн ҫивиттине, «Тюльпан» ача сачĕн ҫивиттийĕпе стенине, «Золушка» ача садĕнче ăшă трассипе канализацие юсаса ҫĕнетессипе ĕҫлемелле.

## ШКУЛСЕМ

2008-2009 вĕренӳ ҫулĕ вĕҫĕнче районта пурĕ 31 шкул пулнă, вĕсенче 4073 ача вĕреннĕ пулсан 2009-2010 вĕренӳ ҫулĕн сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 29 шкул тата 3902 вĕренекен шутланнă. Куратăр ĕнтĕ, вĕренекенсен йышĕ 171 ача чухлĕ чакнă. Ку вăл пĕр пĕчĕк мар вăтам шкулти ача чухлĕ. Ытларах аслă классенче вĕренекенсен йышĕ чакни палăрмăлă. Ҫакă Раҫҫей Федерацийĕн «Вĕрентӳ ҫинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тытмаллипе ҫыхăннă.

Вĕрентӳ ĕҫне экономика тĕлĕшĕнчен эффективлă туса хурас тĕллевпе шкулсенче реструктуризаци ирттерессине пурнăҫлама тивĕр. Ҫапла Тойкилтĕри вăтам шкула тĕп шкул, Очăкасинчи тĕп шкула пуҫламăш шкул–ача сачĕ, Панклири тĕп шкула Йӳҫкассинчи вăтам шкулăн структура пайĕ, Тивĕшри пуҫламăш шкул–ача садне «Незабудка» шкулчченхи вĕрентӳ учрежденийĕ туса хумалла пулчĕ.

2009-2010 вĕренӳ ҫулĕн пуҫламăшĕнче 14 вăтам, 10 тĕп, 5 пуҫламăш шкул–ача сачĕ ĕҫленине документсемпе ҫирĕплетрĕмĕр. Оптимизаци мелĕпе ĕҫлесе пырса 9 база шкулĕ йĕркеленĕ, вĕсем хушшинче – 3 ресурс центрĕ. Ҫак утăмсем вĕренекенсене пахалăхлă вĕрентӳ ресурсĕсемпе тивĕҫтерме май туса парĕҫ. 2009 ҫулхи октябрь уйăхĕнче Юнкă шкулне ҫĕнĕ автобус ҫитрĕ. Пĕтĕмĕшле вара 17 шкул автобусĕ кунсерен 92 ялтан 919 ачана шкула турттарать. Ҫак транспорта тытса тăма та укҫа-тенкĕ сахал мар кирлĕ. Хальлĕхе вара Москакассинчи, Калайкассинчи, Юнкăри тата Ярапайкассинчи вăтам шкулсенче гаражсем ҫук.

Пĕлтĕр вырăнти тата республикăри бюджетран укҫа-тенкĕ уйăрса панипе Оринин шкулĕн ҫивиттине юсаса ҫĕнетме май пулчĕ. Кăҫал вара Ҫатракассинчи вăтам шкулăн ҫивиттине те юсаса ҫĕнетмелле, Йӳҫкассинчи шкулта вара чӳрече блокĕсене улăштармалла тата канализацие шыв пăрăхĕсене юсамалла.

## ВĔРЕНТӲ

Реструктуризаци ирттерни классенче ача йышне ӳстерме тата пĕр учитель пуҫне тивекен вĕренекенсен йышне те пысăклатма май пачĕ.

2001 ҫултанпа вĕренекенсене пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тыттарассине пур шкул та хутшăнма тытăнчĕ. 2006 ҫултанпа – 9-мĕш класра пĕрлехи муниципаллă экзаменсене тытассине те. ППЭ кăтартăвĕсемпе районти база шкулсенче вĕренекенсен (Мăн Сĕнтĕр, Йӳҫкасси, Калайкасси, Чуманкасси, Юнкă, Муркаш, Москакасси, Ҫатракасси, Нискасси) результачĕсем хула шкулĕсенчи вĕренекенсенпе танлашнине ҫирĕплетеҫҫĕ.

Малтанхи вĕренӳ ҫулĕн пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх 13 выпускник ылтăн медальпе, 8 выпускник кĕмĕл медальпе шкултан вĕренсе тухрĕҫ. 9 класран вĕренсе тухнă 22 вĕренекен ятарлă аттестатсем илме тивĕҫрĕҫ. Обязательнăй майпа тытмалла мар предметсемпе патшалăх экзаменĕсене суйланине тишкерсен Мăн Сĕнтĕрти, Муркашри вăтам шкулсенче тата Муркаш лицейĕнче вĕренекенсем виҫҫĕ тата ытларах ППЭ тытма кăмăл туни палăрнă. Ҫав вăхăтрах Тойкилтĕри (пĕр выпускник та ППЭ суйласа илмен), Калайкассинчи тата Ҫатракассинчи шкулсенче ку кăтартусем пĕчĕк пулнă.

Юлашки ҫулсенче биологи, химии, географи предметĕсемпе тытнă ППЭ кăтартăвĕсем ӳссе пыни палăрать. Ытти предметсемпе вара самаях туртăнмалла-ха.

Шкулсем инноваци центрĕсем пулса тăраҫҫĕ. Л. Занковăн аталану вĕрентĕвĕн системипе усă курса пуҫламăш классен учителĕсем С. Желтова, С. Купцова (Москакасси), П. Кожевникова (Нискасси), А. Егорова (Мăн Сĕнтĕр) тата Л. Тихонова (Муркаш) ĕҫлеҫҫĕ. Мăн Сĕнтĕрти тата Муркашри шкулсенчи пуҫламăш классенче «Шкул 2010» системăпа вĕрентеҫҫĕ.

2009-2010 вĕренӳ ҫулĕнче 10-11 классенче вĕренекенсен 86 проценчĕ профильлĕ майпа вĕренет. Ҫут ҫанталăкпа наука, гуманитари профилĕсене ытларах килĕштерни курăнать.

Паян шкулсенче компьютер пурри вĕрентӳпе воспитани ĕҫне те ҫĕнĕлле аталантарма май парать. Вăтамран тăхăр ача пуҫне пĕр компьютер тивĕҫет. Малтанхи ҫул 11 ачана пĕр компьютер лекнĕччĕ. Шкулсем мультимеди проекторĕсемпе (57), проекторсемпе (17) тата интерактивлă доскасемпе (14) пуянланса пыраҫҫĕ.

Пур ача та тăван чĕлхене, тăван тавралăх культурине вĕренме пултарать. Ку тĕлĕшпе шкулсенче электронлă вĕрентӳ пособийĕсем те, кадрсем те ҫителĕклĕ.

Шкулсенче мĕнле квалификациллĕ учительсем ĕҫленинчен ачасен пĕлӳ шайĕ те килет. Ҫак вĕренӳ ҫулĕнче вĕрентӳ тытăмĕнче пурĕ 779 ҫын вăй хурать. Вĕсенчен 66-шĕ – ертӳҫĕ должноҫĕнче, 436-шĕ – педагогсем. Вĕрентӳ ĕҫне тӳрремĕн 387 учитель туса пырать. Вĕсенчен 99 проценчĕ аслă пĕлӳллĕ. Учительсен 73 проценчĕ квалификаци категорине ҫирĕплетсе панă: 10,2 проценчĕ – аслă категорие, 41 проценчĕ – 1 категорие, 22 проценчĕ – 2 категорие. Юлашки икĕ ҫул хушшинче ҫак кăтарту шайĕ чакса пырать. Районти учительсен вăтам ӳсĕмĕ 43 ҫулпа танлашать (2008-2009 вĕренӳ ҫулĕнче – 41 ҫул). Учительсен 7 проценчĕ пенси вăхăтĕнчисем (малтанхи ҫул – 2 процент), 35-55 ҫулхисем пурĕ 74 процент. 25-35 ҫулхисем – 18 процент, 25 ҫултан ҫамрăкраххисем – 1 процент ҫеç. Ҫапла вара учительсен 59 проценчĕ шкулта 20 е ытларах ҫул ĕҫлекенсем.

Хăйсен квалификацине ӳстерме учительсен кашни ҫулах республикăри вĕрентӳ институтне тата ҫĕр-шыври ертсе пыракан аслă пĕлӳ паракан шкулсенчи курссемпе семинарсене хутшăнаҫҫĕ. Тепĕр чухне дистанци мелĕпе те. Пуҫламăш классене вĕрентекенсем вĕрентӳ институтĕнче уйрăмах тачă ҫыхăну тытаҫҫĕ.

Шкулсенче паянхи кун тĕлне Чăваш Республикин тава тивĕҫлĕ 10 учителĕ, «Чăваш Республикин вĕрентĕвĕн тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ» ят илнĕ 3 педагог, Чăваш Республикин Вĕрентӳ министерствин Хисеп грамотипе наградăланисем виҫҫĕн ĕҫлеҫҫĕ. 53 ҫын – «Пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕҫченĕ» паллăна, 18 – «Халăха вĕрентес ĕҫĕн отличникĕ» паллăна тивĕҫнисем.



**Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче те ĕнер юлашки шăнкăрав янăрарĕ. 36 яшпа хĕр пурнăҫ ҫулĕ ҫине тухрĕ.**

## ВОСПИТАНИ

2009-2010 вĕренӳ ҫулĕнче воспитани ĕҫне 260 класс ертӳҫи, 5 психолог педагог, 8 социаллă педагог, 25 аслă вожатăй, директорăн воспитани енĕпе ĕҫлекен ҫумĕсем – 10 ҫын – туса пычĕҫ.

Творчествăлла ĕҫлекен класс ертӳҫисене тупса палăртас, вĕсен ĕҫĕпе ыттисене те паллаштарас тата ăна хаклас тĕллевпе кашни ҫулах районта «Самый классный классный» конкурс ирттеретпĕр. 2009 ҫулта ҫак конкурсра пуҫламăш классене вĕрентекенсем хушшинче Г.А. Анисова (Ильинка шкулĕ), вăтам сыпăкри вĕрентекенсем хушшинче С.Г. Никифорова (Сосновка) ҫĕнтерчĕҫ. Вĕсем республикăра район чысне хӳтĕлерĕҫ. Аслă сыпăкри вĕрентекенсем хушшинче ҫак конкурс ҫĕнтерӳҫисем Е.Н. Ефанова (Муркаш), 25 ҫулччченхи вĕрентекенсем хушшинче Шурча шкулĕнчи М.Р. Ершова пулчĕҫ. 2010 ҫулта та ку конкурс иртрĕ. Ҫĕнтерӳҫĕ ятне ҫаксем тивĕҫрĕҫ: С.В. Федорова (Ҫатракасси шкулĕ), С.Г. Дмитриева (Шурча шкулĕ) тата В.В. Сапожникова (Мăн Сĕнтĕр).

Хăйсен ăсталăхне татах та аталантарса пырас тĕллевпе класс ертӳҫисем те ҫулсерен республикăри вĕрентӳ институтĕнчи йĕркелекен курссене пĕлӳ пухаҫҫĕ.

Вĕренӳ ҫулĕ тăршшĕпех шкулсенче, районта пĕтĕмĕшле те наркомание, пирус туртассине, эрех-сăра ĕҫессине хирĕҫ кĕрешсе профилактика ĕҫĕсене аван йĕркелерĕмĕр. Ҫавăн пекех ҫул ҫитменнисене йĕркене пăсассине асăрхаттарассипе те. Ку анлă ĕҫе эпир районти шалти ĕҫсен пайĕн ҫул ҫитменнисемпе ĕҫлекен уйрăмĕпе тачă ҫыхăнса пурнăҫласа пыратпăр. Профилактика ĕҫĕ тĕрлĕ акци ирттерни урлă та пулса пырать: «Ҫамрăксем – сывă пурнăҫ йĕркишĕн», «Милици тата ачасем», «Урам – пасар» тата ыттисем те. 2010 ҫулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне районти ҫул ҫитменнисен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен комиссинче 58 ҫамрăк учетра тăрать, районти шалти ĕҫсен пайĕнче – 41. Вĕсенче 27-шĕ – шкулта вĕренекенсем.

Каникулсен вăхăтĕнче ачасен сывлăхне ҫирĕплетесси тата вĕсен ĕҫне канăвне йĕркелесси ҫине те яланах пысăк тимлĕх уйăратпăр. 2009 ҫулта вĕренекенсен 47 проценчĕ ҫак ĕҫе туллин явăҫтарма май килчĕ. 14 ĕҫне кану лагерĕ, шкул ҫумĕнчи сывлăха ҫирĕплетмелли 25 лагерь, 20 профиль лагерĕ ĕҫлерĕ. Ĕҫпе тивĕҫтерекен центр урлă 461 ҫамрăка вăхăтлăх ĕҫ тупса пама пултартăмăр.

2009 ҫулта опекăпа попечительство органĕ те ачасен прависене хӳтĕлессине ҫине тăрсах ĕҫлерĕ. 96 рейдра пĕтĕмпе 441 ҫемьери условисене тишкерме май пулчĕ. Вăхăтран вăхăта пăхса тăмалли ҫемьесен пĕлтĕрхи ҫул 61 пулнă. Ҫавăн пекех ачана усрава илнĕ ҫемьесене те тăтăшах тĕрĕслесе тăраҫҫĕ. Пĕлтĕр Раҫҫей Федерацийĕн Административлă нормисене пăснин кодексĕн 5.35 статйипе килĕшӳллĕн (ашшĕ-амăшĕн тивĕҫĕсене пурнăҫламаннишĕн) 100 ытла ашшĕ-амăшне районти ҫул ҫитменнисен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен комиссинче пăхса тухма тивнĕ. 6 ҫынна ашшĕ-амăш правинчен хăтарнă. Районта ачана усрава илнĕ ҫемье 11 пулнă.

Ачасене хушма вĕрентӳпе тивĕҫтерессипе районта 4 учреждени тимлет: ҫамрăк техниксен станцийĕ, ача-пăча пултарулăх ҫурчĕ, ачасемпе ҫамрăксен спорт шкулĕ тата ача-пăча искусство шкулĕ. Вĕсем республика шайĕнче те малтисен ретĕнче. Апла пулсан унта вăй хуракан тăрăшуллă педагогсене те асăнмалла: Ю.Н. Самушков, Э.А. Гордеев, В.Т. Моисеев, С.В. Черкашин. И.В. Петрова ертсе пыракан «Калинка» ташă ушкăнне, Л.А. Митрофанова ертсе пыракан кадетсен ташă ушкăнне республикипех аван пĕлеҫҫĕ.

Физкультурăпа спорта кăмăллакансем валли районта ятарлă сооруженисем сахал мар. Пĕлтĕрхи ҫул пĕтĕмпе районта 52 ăмăрту ирттерме хал ҫитертĕмĕр, кунсăр пуҫне хуҫалăхсен шайĕнче тепĕр 16 ăмăрту. Шкул ачисен спартакиадине йăлана кĕнĕ тăрăх спортăн 8 тĕсĕпе ирттеретпĕр. Район шайĕнчи тĕрлĕ ăмăртăва ирттерме пулăшакан ертӳҫĕсене, уйрăмах Н.Г. Ванеркина («Моргаушская» чăх-чĕп фабрики) тата Б.В. Андреева (Муркаш райповĕ) ырăпа асăнса хăварас килет. Пирĕн вĕренекенсем Раҫҫей тата республика шайĕсенчи 40 ăмăртăва хутшăнчĕҫ. Чăваш Республики Президенчĕн кубокне ҫĕнсе илессишĕн иртекен спартакиадăра пĕтĕмĕшле кăтартусемпе 5-мĕш вырăна тухма пултарчĕҫ.

Районти тата республикăри «Орленокпа» «Зарница» вăйăсене хутшăнма шкулсенчи ҫарпа патриот клубĕсем лайăх хатĕрленеҫҫĕ. Ҫултан-ҫул вĕсен ӳсĕмĕсем (пурĕ 4 клуб: «Родина», Е. Борисов ячĕллĕ, Г. Алексеев ячĕллĕ тата М. Шуйцев ячĕллĕ) те палăрăмлăрах.

2009 ҫулхи ҫитĕнӳсемпе Чăваш Республикин Президенчĕн стипендине районти 9 ҫамрăк тивĕҫрĕ. Раҫҫей Президенчĕн 2006 ҫулхи апрелĕн 6 мĕшĕнче вăй кĕнĕ Указĕ тăрăх Президент премине (30 пин тенкĕ) 3 ҫамрăк хĕр тивĕҫрĕ: Елена Алексеева (Оринин шкулĕнче вĕренет), Татьяна Арсентьева (Йӳҫкасси шкулĕнче) тата Валентина Максимова («Ударник» хуҫалăх).

Ӳсĕмсем ҫук темелле мар. Тăрăшсан вĕсем татах та ытларах пуласси кашни педагогăн пĕлсе тăмалла. Малашне учительсен общестăлла пурнăҫа активлăрах хутшăнассипе те ытларах тимлемелле, ачасене тарăн, пурнăҫ условийĕсен ыйтакан пĕлӳпе тивĕҫтерессишĕн тăрăшмалла.

**З. ДИПЛОМАТОВА,**
**район администрацийĕн вĕрентӳ, ҫамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳҫи.**